Уяв саманчĕсем

# Хаяр вăрçă çинчен обелисксем аса илтерĕç

**ЯКАТКАССИ**

Аслă Çĕнтерӳ кунне халалласа майăн 8-мĕшĕнче Чуманкасси ял тăрăхĕнчи Якаткасси ялĕнче обелиск уçрĕç. Çак пысăках мар ялтан вăрçа тухса кайса пуç хунисене асăнса лартас тенĕ ăна Якаткассисем. В.К. Гордеев депутат тăрăшнипе, ял халăхĕ пĕр шухăшлă пулнипе çак пысăк ĕçе пурнăçланă та.

Уява ял халăхĕпе, ку тăрăхри вăрçă ветеранĕсемпе, тыл ĕçченĕсемпе пĕрле район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ В.Г. Данилов, вырăнти ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Л.Г. Ковалева тата ытти хăнасем те хутшăнчĕç. Малтанах обелиска Иоанн атте çутатса çаврăнчĕ. Ăна уçма вара ветерансемпе пĕрле ĕç пуçаруçине шанчĕç. Самантрах обелиск умĕ чечексемпе тулчĕ.

Чуманкасси ял тăрăхĕнче Тăван çĕршывăн аслă вăрçин ветеранĕсем паянхи кун тĕлне çиччĕн пурăнаççĕ. Митингра вара саккăрмăшне «тупрĕç». Шупашкар хулинче пурăнакан Александр Иванович Иванов та Якаткасси ялĕнче çуралса ӳснĕ иккен. Советскинчи çар коммиссариатĕнчен ăсатнă ăна вăрçа. Берлин таран çитнĕ каччă вăрçă пĕтнĕ хыççăн ĕмĕрĕпех Шупашкарти 31-мĕш номерлĕ шкулта ĕçленĕ, тивĕçлĕ канăва тухнă.

Якаткассинче Мускав хулинчен килнĕ çар çыннисенчен пуçласа (пĕтĕмпе вара çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче вĕсем çак ялтан 11-ĕн) ача-пăча таранах – пурте çак сумлă уявра чĕререн савăнчĕç. Ветерансем умĕнче пуç тайса тав сăмахĕ калакан питĕ нумай пулчĕ. Вĕсем умĕнче пирĕн парăм пысăк тетпĕр пулсан, çак обелиска уçни çав парăмăн пĕр пайĕ те пулин, анчах та тивĕçлĕ пай пулчех пулĕ.

Хисеплĕ ватă çынсене çак кун шкул ачисем те, культура ĕçченĕсем те, Якаткассинчи çынсем те илемлĕ те чĕрене тыткăнлакан концертпа савăнтарчĕç. Шупашкартан килнĕ Олег Кăйкăр юрăç та ветерансене саламласа юрă хыççăн юрă шăрантарчĕ.

**ИЛЬИНКА**

Майăн 9-мĕшĕнче Аслă Çĕнтерӳ уявĕ Ильинкăра та чаплă лару-тăрура иртрĕ. Кунта та халĕ пурăнакан ветерансене, тыл ĕçченĕсемпе вăрçă ачисене сума суса хатĕрленĕ митинга çын чылай пухăнчĕ.

70-65 çул каялла хаяр вăрçăра пуç хунисене асăнса çĕнĕ обелиск уçрĕç Ильинкăра. Кунта пурăнакансем пĕрле пуху пухса обелиска малтанхи вырăнтан кăштах аяккарах тума йышăннă. Вырăнти ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Ю.В. Перцев çак ĕçе тимлесе йĕркелесе пынă. Çак пархатарлă ĕçре пулăшакансем те тупăннă: районти депутатсен Пухăвĕн депутачĕ Валерий Иванович Кожанов, Сергей Александрович Копылов тата Владимир Александрович Янушкин.

Ăна уçиччен Александр атте обелиска çутатрĕ. Çивиттие илсен вара чăн малтан мрамор çинче Ильинка салинчен вăрçа кайса каялла таврăнайманнисен хушамачĕсем куç умне пулчĕç. Халĕ ĕнтĕ вĕсене кашни иртен-çӳренех вуласа пĕлме пултарать.

Пуç хунисене ĕмĕрех асра тытмалли, чĕррисене хисеплемелли пирки аса илтерсе район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов та пуçтарăннисене пысăк уяв ячĕпе саламларĕ. Чăваш Енри çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсен пайĕн пуçлăхĕ В.Е. Андреев, районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Е.И. Плечов тата ыттисем те сăмах илчĕç.

Шупашкартан килнĕ «Березка» çамрăксен клубĕ вăрçă çинчен хатĕрленĕ кĕвĕ композицине курнă чух вара куççуль кăларакансем нумай пулчĕç. Вăхăт та сиплеймест иккен çухату тӳснине. Обелиск вара пуç хунисем çинчен татах нумай çул аса илтерĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**





**Сăн ӳкерчĕксенче: Якаткассине çар çыннисем йышлăн пухăнчĕç; Ильинкăри çĕнĕ обелиск.**

Спорт

# Вĕренӳ çулне вĕçлекен спорт ăмăртăвĕ

Майăн 4-5-мĕшĕсенче шкул ачисемшĕн пысăк спорт ăмăртăвĕ иртрĕ. Акă улттăмĕш çул ĕнтĕ районти çăмăл атлетика спартакиадине хутшăнса вĕсем «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» акционерсен уçă пĕрлешĕвĕн кубокне çĕнсе илессишĕн ăмăртрĕç.

Фабрикăн генеральнăй директорĕ Николай Григорьевич Ванеркин ача чухнех спорта явăçса унпа туслашни пурнăç тăршшĕпех кирлĕ пуласси çинчен каланине спартакиадăна хутшăнакансем вырăнтах курса ĕненме пултарчĕç. Николай Григорьевич хăй те, Калайкассине спартакиадăна килсе çитнĕ республикăри паллă тренерсемпе ертӳçĕсем те – пурте ачаранпах спорта çывăх пулнă иккен. Халĕ вара, тĕрлĕ сферăсенче вăй хураççĕ пулсан та, хăйсен тăрăшулăхĕпе тата спортра туптанă чăтăмлăх пулăшнипе ăнăçусем тăваççĕ. Апла пулсан спорт, физкультура тата сывă пурнăç йĕрки ăнăçусен формулин тытăмне кĕреççĕ.

Спартакиадăна икĕ кун хушшинче 500 ытла вĕренекен хутшăнчĕ. Малтанхи кунне вăтам шкулсем, иккĕмĕш кунне тĕп шкулсем ăмăртрĕç. 100 м, 200 м, 400 м, 800 м, 1500 м, 3000 м чупасси, çӳллĕшне тата вăрăмăшне сикесси, етре ывăтасси, эстафета, хăвăрт утасси – çак тĕссенче ăмăртрĕç пĕр-пĕринпе çамрăк спортсменсем. Калайкассинче иртекен спорт ăмăртăвне ӳкерме телевиденинчен килни те ачасене самаях хавхалантарни сисĕнчĕ.

Çăмăл атлетикăн тĕсĕсенче çĕнтерӳçĕсем те чи вăйлисемех пулса тăчĕç. Пĕтĕмĕшле кăтартусемпе малти вырăнсене çак шкулсен командисем çĕнсе илчĕç: Калайкассинчи вăтам тата Кашмашри тĕп шкулсем. Иккĕмĕш вырăнта – Муркашри вăтам тата Тойкилтĕри тĕп шкулсен командисем. Виççĕмĕшĕнче – Орининти вăтам тата Шомикри тĕп шкулсем. Çĕнтерӳçĕсем дипломсемпе медальсене тата кубока тивĕçрĕç.

# Велочупура

В. Шалтыков СССР спорт маçтăрĕн парнисене çĕнсе илессишĕн майăн 9-мĕшĕнче «Муркаш – Уйкас Янасал» маршрутпа велочупу иртрĕ. Çак ăмăртăва Ильич ячĕпе хисеплenекен хуçалăх ирттерет. Кăçал 5-20 км дистанцисене Москакассинчи, Çатракассинчи вăтам шкулсенче тата Тойкилтĕри, Шурчари, Сосновкăри тĕп шкулсенче вĕренекенсем, хĕрарăмсемпе арçынсем тухрĕç.

Тĕрлĕ ӳсĕмсенче вĕренекенсем хушшинче Н. Филиппов (Сосновка), Н. Антонова (Шурча), В. Васильева (Тойкилтĕ), С. Григорьев (Çатракасси), Е. Егорова (Сосновка) мала тухнă. Чи çамрăк спортсменсем те ăмăртăва хутшăнса ăнăçу тума пултарнă: Александр Васильевпа Акилина Рылина çĕнтерӳçĕсем пулса тăнă. Арçынсенчен финиша чи малтан Николай Белов, хĕрарăмсенчен – Алена Антонова çитнĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**


**14 мая с 9-00 до 18-00 часов в Моргаушском ДК продажа обуви Ульяновской, Белорусской фабрик. Весна – лето.**

**Керамзитобетонные блоки, щебень гранитовый, известковый, керамзит, гравмасса, песок речной, карьерный строительный, торф, с доставкой.**
**Тел.: 8-906-383-65-13, 8-903-389-98-62. 1-8.**

**Продаю двухкомнатную квартиру в с. Моргауши по ул. 50 лет Октября, д. 12, площадью 52 кв. м.**
**Тел.: 8-917-662-71-65.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 3-5.**

**Бетон, раствор любых марок. Песок, гравмасса, щебень, ЖБИ, асфальт. Организация доставки. Тел.: 8(8352)52-95-95, 8-927-66-88-778, 8-927-668-84-40. 18-38.**

**Продаю деревянный пятистенный дом, в хорошем состоянии, на вывоз. Тел.: 8-905-344-27-53.**

**В ОАО «Моргаушский кирпичный завод» требуются работники на должности машинист экскаватора одноковшевого IV разряда, машинист бульдозера V разряда: ДТ-75, Т-170. Прием на работу будет производиться после собеседования на конкурсной основе. 1-3.**


**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:060201:107, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Верхние Олгаши, ул. Центральная, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 4001 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Совет директоров ОАО «Моргаушскавтотехсервис» сообщает о проведении общего собрания акционеров 8 июня 2010 года**

Начало собрания в 14.00 часов.
Начало регистрации в 13.00 часов.
Место проведения: зал заседания административного здания ОАО «Моргаушскавтотехсервис».

Повестка дня:
1. Избрание счетной комиссии.
2. Отчет о результатах финансово-хозяйственной деятельности и утверждение годового отчета, баланса, счета прибылей и убытков, распределение прибыли за 2009 год.
3. Утверждение акта проверки ревизионной комиссии и аудитора.
4. Утверждение решения Совета директоров о дивидендах за 2009 год.
5. Избрание членов Совета директоров.
6. Избрание членов ревизионной комиссии.
7. Избрание генерального директора.
8. Утверждение аудитора общества.
9. Утверждение положений о Совете директоров, ревизионной комиссии, о подготовке, созыве общего собрания акционеров.
10. Ознакомление решениями заседания Совета директоров.

**Совет директоров ОАО «Моргаушскавтотехсервис».**

Информация:
Открытое акционерное общество
«МОРГАУШСКИЙ АВТОМОБИЛЬНО-ТЕХНИЧЕСКИЙ СЕРВИС»
Адрес:429530, Россия, Чувашская Республика, с. Моргауши, ул.50 лет Октября, д.23,тел.: 62-7-90, факс: (8241)62-7-90
Стоимость чистых активов на 31.12.2010 г. - 8458 тыс. руб.
Размер уставного капитала на 31.12.2010 г. - 2995 тыс. руб.
Количество акционеров на 30.04.2010 г. - 187 чел.
Специализированный регистратор: филиал «ОРК - Чебоксары» - ОАО «Объединенная регистрационная компания», лицензия ФКЦБ России №10-000-1-00314 от 30.03.2004г.
Адрес: 428018, Россия, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. К.Иванова, д.79/16, офис 69 , тел.: 58-39-38

**БУХГАЛТЕРСКИЙ БАЛАНС (тыс. руб.) за 2009 г.**

| АКТИВ | На начало отчетного периода | На конец отчетного периода |
|---|---|---|
| **1. Внеоборотные активы** | | |
| Основные средства | 3800 | 3628 |
| **2. Оборотные активы** | | |
| Запасы | 2925 | 3325 |
| **Дебиторская задолженность** | **1803** | **407** |
| **Денежные средства** | **5** | **1835** |
| **БАЛАНС** | **8533** | **9195** |
| **ПАССИВ** | | |
| **3. Капитал и резервы** | | |
| **Уставный капитал** | 2995 | 2995 |
| Резервный капитал | 29 | 51 |
| Добавочный капитал | 7362 | 7362 |
| Нераспределённая прибыль(непокрытый убыток) | (2369) | (1950) |
| **5. Краткосрочные обязательства** | | |
| **Кредиторская задолженность** | **516** | **737** |
| **БАЛАНС** | **8533** | **9195** |

**ОТЧЕТ О ПРИБЫЛЯХ И УБЫТКАХ (тыс. руб.)**

| Показатель | за 2009 год |
|---|---|
| Выручка (нетто) от продаж | 8516 |
| Себестоимость продаж | (7484) |
| Прибыль от продаж | 1032 |
| Прочие доходы | 1126 |
| Прочие расходы | (1427) |
| Прибыль (убыток) до налогообложения | 731 |
| Иные обязательные платежи из прибыли | (290) |
| Чистая прибыль (убыток) | 441 |

**Генеральный директор Л.Д.Дмитриев**
**Главный бухгалтер Л.П.Иванова**

Достоверность бухгалтерского баланса и отчета о прибылях и убытках подтверждена аудиторской фирмой ООО «Н.И.К.А.Р-Ч».(лицензия № Е 008754 выдана Министерством финансов РФ от 25.12.2007г.).


выдаем на выгодных условиях
ЗАЙМЫ
работаем с пайщиками
с.Моргауши, ул.Чапаева, 44а/2
6-23-10, 8 927 667-48-92
выгодные
%
ставки
КПКГ “КАПИТАЛ”
Св-во гос.рек. 21 № 001329502 от 26.05.04г.

**ЗАО МСО «Моргаушская» предлагает:**
**– одно-, двухкомнатные квартиры;**
**– блоки керамзитобетонные пропаренные, ветеранам ВОВ – скидки!**
**Обращаться по тел.: 63-1-19, 69-8-59.**
**Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, 9А (в здании редакции).**

**Продаю деревянный пятистенный дом с надворными постройками в с. Тиуши. Тел.: 8-927-996-30-74.**


**Участник долевой собственности Павлов Георгий Александрович, 15.09.1956 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, д. Б. Токшики, ул. Школьная, д. 21, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Тораевское, на территории землепользования СХПК «Динамо», участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:210201 площадью 2,32 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**
**1. Администрации Тораевского сельского поселения.**
**2. Павлову Георгию Александровичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, д. Б. Токшики, ул. Школьная, д. 21.**

СПК-племзавод «Свобода» правленийĕ
**Александр Иванович**
**ФОМИН**
пенсионер вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

СПК-племзавод «Свобода» правленийĕ
**Михаил Федорович**
**МАКСИМОВ**
пенсионер вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**
**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.**
**ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**
**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**
**Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1 пичет листи.**
**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**
**Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ Белов А.П.**
**Пичете панă 11.05.2010 г.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 3980.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.